48

48

# УКАЗАНІЕ ПУТИ

# ВЪ ЦАРСТВІЕ НЕБЕСНОЕ

НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

ПО СОЧИНЕНІЮ ВЫСОКОПРЕОСВЯЩЕННѢЙШАГО ИННОКЕНТІЯ МИТРОПОЛИТА МОСКОВСКАГО И КОЛОМЕНСКАГО.

КНИГА ВТОРАЯ.

## Жизнь и страданія Іисуса Христа.

Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.

КАЗАНЬ.
Типо-литографія Императорскаго Университета.
1893.

Отъ Совѣта Братства Святителя Гурія печатать разрѣшается. Казань, 21 августа 1893 года.

Предсѣдатель Совѣта Братства Св. Гурія,
Анастасій Епископъ Чебоксарскій.

# ІИСУС ХРИСТОС ПУРӐННИПЕ АСАПЛАННИ ҪИНҪЕН.

Іисус Христос ҫӗр ҫинҫе йепле пурӑннӑ, йепле асапланнӑ Вӑл пирӗншӗн.

Етеме Турӑ ҫӗр ҫине йепле килнӗ ҫапла пурӑнас ҫине ҫуратса йаман, етемӗн мӗн тӑвас килнӗ ӑна туса тӑма хуман, етеме хӑй ӑсӗпе хӑй ирӗкӗпе пурӑнма хушман. Турӑ йеверлӗ пултарнӑ етемӗн пурӑнасса та Турӑ ирӗкӗпе, Турӑ кӑмӑлӗпе пурӑнас пулаҭ, мӗн пур курас ырӑлӑхӗ, мӗн пур телейӗ те етемӗн ҫав телей. Ӯсен йывӑҫӑн тураҫӗ йывӑҫӗнҫен сӗткен илсе тӑраҭ, йывӑҫӗнҫен сӗткен илсе тӑнӑ ҫухне турат хӑй те ҫӗрӗ, хӑй те ӯссе хунаса лараҭ. Йывӑҫҫинҫен уйӑрӑлсассӑн, йывӑҫҫинҫен сӗткен илми пулсассӑн, турат типсе хӑрса лараҭ, пӗтет, ҫухалаҭ, сайа кайаҭ вара вӑл. Йывӑҫ тураҫӗн мӗн пур ырӑлӑхӗ те йывӑҫҫинҫен сӗткен илсе тӑнинҫен кӑна килет. Ҫавӑн йеверлӗ, етеме те Турӑ Хӑй ырӑлӑхӗнҫен ырӑлӑх илсе тӑмалла тунӑ, Хӑй ӑслӑлӑхӗнҫен ӑс илме, Хӑй кӑмӑлӗнҫен кӑмӑл илме, Хӑй ирӗкӗнҫен ирӗк илсе тӑмалла тунӑ. Турӑ ирӗкӗпе пурӑннӑ ҫухне, етем ырӑлӑх курса пурӑнаҭ. Турӑ ирӗкӗнҫен

тухсассӑнах, вара ҫавӑ ырӑлӑха ҫухатаҭ, етем ҭунӗ те вара йывӑҫ тураҭӗ хӑрнӑ йевӗрлӗ пӑсӑлса кайаҭ, типет, хӑрса лараҭ, ҫухалса сайа кайаҭ. Йепле хӑрӑк турата шӗкӗ ҫийет, ҫавӑн пек вара етем ҭунне те шуйттан хӑй аллине ӳкерет. Етемӗн ҫавӑнпа мӗн курнӑ ырӑлӑхӗ те Турӑ ирӗкӗпе пурӑннинҭен кӑна килет. Авал та етем Турӑ ирӗкӗнҭен тухса шуйттан кӑмӑлне туса хӑй ирӗкӗ хыҫҫӑн кайсассӑнах шуйттан аллине ӳкнӗ, Турӑ хӑйне пилленӗ ырӑлӑха ҫухатнӑ. Хӑй курса тӑма ырӑлӑх туймашкӑн етемӗн хӑйӗн кӑмӑлне ҭарса Турӑ кӑмӑлӗ тӑрӑх пурӑнас пулаҭ. Турӑ мӗне хушнӑ, ҫавна туса тӑрас пулаҭ.

Кашни ҫыннӑн Турӑ законне тытса тӑрас пулаҭ. Вӑл закона икӗ заповѣдӗ ҫинҭе каланӑ. Малтанхи заповѣдӗ: Хӑвӑн Турруна пӗтӗм ҭунупала, пӗтӗм шухӑшупала, пӗтӗм вӑйу-хӑватупала йуратса тӑр. Иккӗмӗш заповѣдӗ: ҫынна хӑвна ху йуратнӑ пек йуратса тӑр.

Ҫав закона кам мӗн ҭухлӗ тытса тӑраҭ, ҫавӑн ҭухлӗ вӑл Турӑран ырӑлӑх илет. Анҭах ҫак ик заповѣде пӗтӗмпех тытса туса ҫитерекен, пӗтӗм пурӑнӑҫне ҫак ик заповѣд тӑрӑх пурӑнса ирттерекен, етем хушшинҭе никам та ҫук, никам та пулман, никам та пулас ҫук. Іисус Христос Хӑй анҭах вӑл закона пӗтӗмпех тытса тӑнӑ, вӑл законтан нихҫан та тухман, вӑл закон мӗн хушнине пӗтӗмпех туса ҫитернӗ.

Вӑл закона тытса тӑрас тӗлешрен мӗн пур таса ҫынсем, ҭи Аслӑ святой ҫынсем те етем ҫутса лартнӑ ҫутӑ пек анҭах ҫутатса тӑнӑ. Етем ҫутнӑ ҫутӑ мӗн ҭухлӗ ҫутӑ пулсассӑн та хӗвеле ҫитесси ҫук. Пӗр

Іисус Христос анҫах хӗвел пек ҫутӑлса пӗтӗм тӗнҫене ҫутатса тӑраҭ.

Йепле хӗвел ҫине куҫпа пӑхма ҫук, хӗвел йепле икенне куҫпала пӑхса пӗтӗмпех тӗпни-йеррипех курма ҫук, ҫавӑн пекех Іисус Христос тунӑ ырӑ ӗҫсене те пӗтӗмпех, тӗпни-йӗррипех пӗлсе каласа кӑтартма ҫук. Вӑл йепле пурӑннине, йепле ырӑ ӗҫсем тунине хӑшне-хӑшне Евангеліе ҫинҫе каланӑ. Унта та анҫах пурне те каламан, етеме мӗн ҫухлӗ пӗлме кирлӗ, ҫавӑн ҫухлӗ анҫах каланӑ, пире етеме Ун ҫинҫен Евангеліе ҫинҫе каланине пӗлсессӗн пӗтӗмпех ҫитмелле. Евангеліе ҫинҫе Ун ҫинҫен ҫырнине кӗскенӗн кӑна пӗлес тесессӗн ак мӗн пӗлме пулаҭ.

Нийепле етем те, етем мар, нийепле Ангел та Турра Іисус Христос йуратса тӑнӑ ҫухлӗ йуратса тӑни ҫук, ҫавӑн ҫухлӗ Вӑл Турра йуратса тӑнӑ, ҫавӑн ҫухлӗ халӗ те йуратса тӑраҭ.

Іисус Христос йаланах Хӑй Ашшӗне, Атте Туррӑмӑра кӗл-туса пурӑннӑ, ҫын курмалла кӗл-тунинҫен ытла Вӑл ҫас-ҫасах ҫӗрле кӗл - тунӑ, пӗҫҫен ҫӗрте, улах ҫӗрте кӗл-тума йуратнӑ.

Іисус Христос праздниксерен, пуринҫен ытла Пасха праздникӗнҫе, Іерусалимри ҫиркӳве ҫӳренӗ, вӑл ҫиркӳ Хӑй пурӑннӑ ҫӗртен ҫывӑх пулмасассӑн та, шӑмат кунсерен Вӑл ҫынсем Турра кӗл-тума пухӑннӑ ҫӗре, Турӑ законне вӗренме пухӑннӑ ҫӗре ҫӳренӗ.

Іисус Христос мӗн тытӑнса тунӑ ӗҫӗпе пуринпе те Турӑ йатне мухтава кӑларса пурӑннӑ, Хӑй пӗҫҫен ҫӗрте те, ҫынсем умӗнҫе те йаланах Турра мухтав кӳнӗ Вӑл.

Ҫӗр ҫинҫе Іисус Христос мӗн ҫухлӗ пурӑннӑ,

кирек хăçан та Вăл пĕр майах Хăйĕн Ашшĕне хисеплесе, пăхăнса, йуратса тăнă, Хăйĕн ашшĕ вырăнĕнђи таса Іосифа та çаплах ашшĕ вырăнне пăхăнса, итлесе тăнă. Пуçлăхсене те, ватăсене те хисеплесе пурăннă Вăл, çĕрти патшана куланай парса тăнă.

Іисус Христос ку тĕнђене йепле ĕç тума килнĕ, Хăй çине илнĕ ĕçе Вăл йаланах тăрăшса, йуратса тунă, йывăр килсессĕнте Вăл тытăнас пулмасђĕ тесе ӳкĕнмен, мĕн тумаллине пурне те тĕрĕссипе ђăннипе туса çитернĕ.

Іисус Христос пур çынна та йуратнă, пур çынна та ырă суннă, пурне те Вăл ырăлăх тунă, етеме ђăннипе ырăлăх кăтартасшăн Хăйне Хăй шеллемен, вилĕмрен те хăраман.

Іисус Христос Хăйне мĕн ђухлĕ хурлантарнине пурне те тӳснĕ. Хăйне усал тăвакансем çине нихçан та ӳпкелемен. Унăн тăшманĕсем курайммасăр мĕн ђухлĕ мăшкăллана Ăна, тăрăхласа кулнă Унтан, темиçе хут вĕлерме те тăнă Ăна, Вăл çапах вĕсем çине пĕре те кӳренмен, пĕре те çиленмен. Хăйне курайманскене, Хăйĕн тăшманĕсене пĕтермешкĕн, вĕсене пĕтĕмпех тĕп тумашкăн Ăна пĕр сăмах та çитнĕ пулĕђђĕ; Вăл вĕсене апла туман, усал сунман ырă суннă, ырăлăх тунă, вĕсемшĕн кĕл-тунă Вăл, хĕрхеннĕ вĕсене, вĕсем çухалнăшăн Хăй хурланса йĕнĕ.

Мĕн çуралнăран пурăнса вилиђђен те, Іисус Христос пĕр çылăхлă сăмах та каламан, пĕр çылăхлă ĕç те туман, пĕр çылăхлă шухăш та шухăшламан; кирек хăçан пулсан та, Вăл йаланах пур çынна та ырăлăх туса пурăннă.

Пăхар халĕ ĕнтĕ, кунта çĕр çинђе пурăннă ђух-

не, Іисус Христос пирĕншĕн мĕн ҫухлĕ хĕн курнă, мĕн ҫухлĕ асапланнă.

Іисус Христос Вăл Турă Ывăлĕ, Хăй Турă пулсанта, Хăй ҫине етем ӳтне, етем ҫунне илнĕ, пур тĕлешрен те пĕтĕмпех етем пулнă, пирĕн пек етемех пулнă Вăл, ҫылăх анҫах пулман Унăн, ҫавăнтан анҫах уйрăм пулнă Вăл ытти етемрен. Пĕтĕм тĕнҫене тытса тăракан Турă Хăй пулсассăн та, Вăл етем хушшине мĕскĕн ҫын пулса, ҫура пулса килнĕ. Пĕтĕм пĕлĕте, пĕтĕм ҫĕре тытса тăракан Патша Хăй пулсассăн та, Вăл йурлă ҫын, ҫук ҫын пулса ҫуралнă, Амăшĕ Унăн йурлă ҫын пулнă, ҫуралассата Вăл ҫĕр витере ҫуралнă, ҫуралсассăн Ăна выҫăхсем валли ҫиме хуракан сырăш ҫине хунă, ашшĕ вырăнĕнҫи ҫын Унăн йывăҫ каскалакан йурлă ҫын пулнă.

Іисус Христос Вăл Хăй тĕнҫене закон парса тăракан Турă Хăй пулсан та, ҫĕр ҫинҫи закона пăхăнса, ҫуралсассăн сакăрмĕш кун ӳт кастарса Хăйĕн тасаран таса йунне тăкнă. Унтан вара Ăна тасаран таса Амăшĕ ҫиркӳве илсе пынă та, Унăшăн, тĕнҫе халăх парăмне Тӳлекеншĕн укҫа тӳленĕ. Алăри аҫа ҫухнех, кăкăр ĕмекен аҫа ҫухнех Ăна Ирод патша вĕлерме шыранă, ашшĕ-амăшĕ аҫашласа сыхласа усрас ҫĕртен Унăн таҫта йут ҫĕре, Египете, тарса тертленсе ҫӳремелле пулнă.

Аҫа ҫухне Вăл нимĕн те пĕлмен тесе, Хăйне Хăй сыхласа усрама пулман Унăн тесе, ан шухăшлăр: Іисус Христос пĕтĕмпех етем пулсассăн та, Хăйех пĕтĕмпе Турă пулнă Вăл. Ҫавăнпа Вăл Хăйне мĕн тунине пурне те курса, пурне те пĕлсе тăнă, аҫа

ђухне те етем законне ирĕксĕр пăхăнман, Хăй ирĕкĕпе пăхăннă.

Хăй Турӑ, пĕтĕм тĕнђене тытса тăракан Турӑ Хăй пулсассăн та, пĕтĕм пĕлĕт, пĕтĕм çĕр Хăйне пăхăнса тăнă пулсассăн та, мĕн ђухлĕ хăватлă Ангелсем мĕн пурĕ пурте Хăйне пăхăнса тăнă пулсассăн та, Вăл çапах Хăйĕн çĕр çинђи пурăнăçне Хăй Амăшне пăхăнса тăрса ирттернĕ, Амăшĕ Хăй пултарнă етем пулсан та.

Тĕнђере мĕн пур пурлăха-пуйанлăха, мĕн-пур ырăлăха Хăй аллинђе тытса тăракан Турӑ пулсассăн та, Ісус Христос çĕр çинђе етем пулса тăнă ђух, çав тĕрлĕ йурлă пулнă; Унăн ниçта пуçне ђикме те вырăн пулман.

Ісус Христос Хăй пĕтĕм çут çанталăка тытса тăракан Патша пулсассăн та, çĕрти патшана парăнса куланай тӳлесе тăнă.

Ісус Христос Хăйне пĕтĕм Ангелсем пăханса, Ун кушĕнђен пăхăнса тăраççĕ пулсан та, Вăл хушнине туса тăраççĕ пулсан та, Вăл Хăй çынсене пăхăнса тăнă, тарçă-ђура вырăнне ĕçленĕ вĕсем валли, Хăй аллипе Хăй Хăйĕн вĕренекенĕсенĕн урисене çунă Вăл, вĕсем нимĕне вĕренмен ахаљ çынсем пулсассăн та, вĕсене асла хурса, Хăйне кĕçĕне хурса ђăрманнăшыраннă вĕсемшĕн.

Ісус Христос халăха вĕрентсе, халăхшăн тăрăшса çӳренĕ ђухне, çав халăхранах темĕн ђухлĕ хур курнă, çав халăх хушшинђенех Ăна кураймансем пулнă, çав халăх хушшинђенех Унăн тăшманĕсем Ăна мăшкăлламан мăшкăл йулман, Ăна хурлантарман хурлăх йулман, Ăна усал туман усал йулман.

Вĕсем Ӑна çылăхлă çын тесе те мăшкăлланӑ. Моисей законне пăсакан тесе те айăпланӑ, ăссăр çын, нимĕн пĕлмен çын тесе те кулнă Унтан, йывăç каскалакан ӡухăн çын ывăлĕ тесе те хурланă Ӑна, çылăхлă çынсенĕн тусĕ-йулташĕ, усăсăр çисе хырăмшăн пуранакансенĕн, ерек ĕçекенсенĕн, улталаса укçа пухакансенĕн тус-йышĕ тесе те тăрăхланă Ӑна. Пĕрре Унăн тăшманĕсем Ӑна кураймасăр ту çинӡен тĕртсе йарса вĕлерме тăнă, тепĕр ӡухне вĕсем Ӑна ӡулпа персе хĕнесе вĕлересшĕн пулнă. Вăл вĕрентнине вĕсем суйеçĕ çын суйеçтерни çумне кайса хунă, Вăл вĕрентсе каланă тасаран таса сăмахсене ултавçĕ илĕртсе каланă сăмахпа танлаштарнă. Вăл ӡирлĕ-суранлă çынсене тӳрлетсессĕн, вилнĕ çынсене ӡĕртсессĕн, Унăн тăшманĕсем Ун çинӡен калаçса çӳренĕ: щуйттан пуçлăхĕ, сатана пулăшнипеле тăват Вăл апла, тесе çӳренĕ, Унăн Хăйĕн ăшĕнӡе те шуйттан ларат тесе хайарланă Ӑна, хăйсем хушшинӡе калаçнипе çитмен, йепле те пулсассăн ытти çынсене ĕнентересшĕн тăрăшса, Ун çинӡен усал йат сарса çӳренĕ.

Çапла Іисус Христос мĕн çуралнăранпа пуçласа вилиӡӡенех пур йенӡен те хурлăх курса, пур йенӡен те асапланса пурăннă. Етемрен те хур курнă Вăл, етемшĕн те хĕн курнă. Етем Ӑна итлеменшĕн, Ӑна кӳрентернĕшĕн анӡах хурланман Вăл, Ӑна итлемесĕр етем Хăй ӡунне çухатат, çухалас çĕртен çăлăнасшăн мар, çавăншăн пит нумай хуйхăрнă. Іисус Христос Вăл пирĕншĕн куçа курăни те, куçа курăнми те асапланнă: куçа курăнса тăракан хурлăхран пуçне, Хăйне хурлантарнинӡен пуçне тата Вăл куçа курăнми асаппала асапланнă. Унăн тăшманĕсем ăшĕсенӡе мĕн

Хӑйӗн вӗренекенӗ сутнӑ, Ӑна пӗлсе тӑракан ҫын, Унпа пӗрле ӗҫсе-ҫисе пурӑннӑ ҫын, Вӑл йепле пурӑннине, йепле ырӑ ӗҫсем, йепле хӑватлӑ ӗҫсем тунине, йепле ырӑлӑха вӗрентнине хӑй куҫӗпе курса, хӑй хӑлхипе илтсе ҫӳрекен ҫын,—ҫав ҫын сутнӑ Ӑна. Ӑна та пулсан тӳрех, кура-тӑркаҫах сутман: ҫейелӗх-пе улталасшӑн тӑрӑшса, йуратам пек пулса ҫуп-туса сутса йанӑ Ӑна, хакне те пулсан вӑтӑр кӗмӗлшӗн кӑна сутса йанӑ Ӑна.

Камшӑн ҫав тӗрлӗ асапланнӑ Христос? Пур ҫылӑхлӑ ҫыншӑн асапланнӑ Вӑл, Адамран пуҫласа ӗмӗр пӗтиҫҫен мӗн ҫухлӗ ҫылӑхлӑ ҫын пулнӑ, мӗн ҫухлӗ ҫылӑхлӑ ҫын пур, малашне мӗн ҫухлӗ пулмалла,—пуриншӗн те хӗн курнӑ Вӑл. Кам Ӑна Хӑйне асаплантарнӑ, ҫавсемшӗн хӑйсемшӗн те асапланнӑ Вӑл; ҫав тӗрлӗ тӳсейми хӗн-асаплӑха тытса паракан тӑшманӗсемшӗн те асапланнӑ. Хӑйӗнҫен мӗн ҫухлӗ ырӑлӑх курса та тав тӑвас вырӑнне Ӑна курайманссемшӗн, Ӑна йепле те пулсан усал тума тӑрӑшакансемшӗн те асапланнӑ Вӑл.

Пирӗншӗн хамӑршӑн та асапланнӑ Вӑл, тӑвансем: саншӑн та, маншӑн та, пурсӑмӑршӑн та асапланнӑ. Кам епир, апла пирӗншӗн Христос асапланма? Мӗн ырӑлӑх тунӑ епир пирӗншӗн Вӑл асапланма? Мӗншӗн Вӑл пире ҫав тӗрлӗ йуратнӑ, ҫав тӗрлӗ хӗрхеннӗ? Вӑл пирӗншӗн хӗн курнӑшӑн епир Ӑна хирӗҫ мӗн туса тавӑрӑпӑр, тӑвансем? Епир куллен кун Ӑна, хурлантарса пурӑнатпӑр, куллен кун епир усал тӑватпӑр, куллен кун суйа ҫинҫе, ултав ҫинҫе тӑрса, ырӑлӑха курайmасӑр пурӑнса кӳрентеретпӗр Ӑна, куллен кун епир Вӑл пирӗншӗн хӗн курнине

шухăшланине, мĕн ђухлĕ Ăна хăйсенĕн ăшĕнђе курайманнине пурне те витĕр курса тăрса çавăншăн та асапланнă Вăл. Хăшĕ хăшĕ пăхма Ăна йуратнă пек пулнă, Вăл вĕрентнине итлесе çӳренĕ, Унăн сăмахне ђĕре варрине хунă пек кăтартнă, хăйсем ăшĕнђе çавăнтах йе ĕненмен-и Вăл каланине, йе ĕненсе те хăйсенĕн ђунне çăлласшăн тăрăшман-и,—çавсене пурне те витĕр курса, витĕр пĕлсе тăрса Христос çавăнпа та та нумай асапланнă.

Асапланнă асапне те Вăл нађар, нимĕн пĕлмен çынсенђен асапланман, ыттисем усал çын вырăнне хуракан çынсенђен асапланман. Пуринђен ытла Вăл Іудея халăхĕнђи аслă çынсенђен, ђи хисеплĕ çынĕсенђен асапланнă. Священник пуçлăхĕсем, кĕнеке-çынĕсем, закона вĕреннĕ çынсем, халăха пăхса тăракан пуçлăхсем, çĕр çине Çăлакан килнине хăйсем те пĕлсе, хăйсем те кĕтсе тăракансем, — çавсем Ăна ĕненмен, çавсем йышăнман, çавсем Вăл вĕрентнине итлесшĕн пулман. Кĕтсе тăнă çĕртен кĕтсе илсессĕн вĕсем Ăна ултавçăпа пĕр хисепе хунă, законтан тухса усал тăвакан çын хисепне хурса Ăна асаплантарса вĕлернĕ. Іудея халăхĕ, ахаљ хура-халăх Ăна хĕрес çине пăталасшăн пулман çĕртен вĕсем халăха хĕтĕртсе тăнă: вăрă-хураха Вараввана, халăха мĕн ђухлĕ сийен туса, çынсене йĕртсе пурăннă çынна, кура-тăркађах çав тĕрлĕ усал çынна çăлса хăварттарнă та, Іисуса, Святойсенђен Святойа, Варавваран та усала хурса пăталаса вĕлерттернĕ. Куратăр-и етем усаллăхĕ ăçта çитиђђен пырат, мĕн тĕрлĕ хăрушă ĕç тума пултарат! Ку хурлăхпала та çитмен халĕ, пуринђен хурлăхли ак мĕн пулнă. Ăна сутасса та

мăшкăлласа, урапала таптаса пурăнатпăр, пирĕн пирки асапланнăшăн тав тăвас вырăнне епир хамăр çылахăмăрсене ытараймасăр çылăха йуратса, Ăна хурлантаратпăр, кулатпăр Унтан, асаплантаратпăр Ăна, тепĕр хут хĕрес çумне пăталатпăр Ăна. Ав кам епир пирĕншĕн пурсăмăршăн, саншăн та, маншăн та, уншĕн те, пирĕншĕн йурăхсăрсемшĕн, пире хĕрхенсе, пире çав тĕрлĕ усалсене йуратса асапланнă Вăл пирĕншĕн. Епир йепле пулассине, епир йепле Ăна тав тăвассине, малтанах курса малтанах хурланнă Вăл, малтанах асапланнă пирĕншĕн.

Хăй асапланса вилес умĕн, çĕр çинҫе пурăнас йулашки кунĕсенҫе, Іисус Христос ҫи хăватлă ĕç туса кăтартнă: вилнĕ çынна, Лазар йатлă çынна ҫĕртсе тăратнă Вăл, тăватă кун тупăкра выртнă çынна, çĕрсе шăршланма пуçланă çынна вилĕмрен ҫĕртнĕ. Çав хăватлă ĕçе тунине темĕн ҫухлĕ халăх хăйсенĕн куçĕпе курса тăнă, халăх хушшинҫе нумайĕшĕ Іисус Христоса ĕненекен те пулнă. Анҫах Іудея халăхĕн священник пуçлăхĕсем, кĕнеке çынĕсем, Іисус Христоса ĕненсе йышăнас вырăнне, Вăл тĕнҫене ҫăн Çăлакан тесе ыттисене ĕнентерес вырăнне, Каіафа патне пухăннă та йепле пĕтерес-ши Кăна, йепле айăп тупас-ши Кунăн çумĕнҫе, тесе канашланă. Шухăшласан-шухăшласан вара Іисус Христоса, вилнĕ çынсене ҫĕртекенскере, хайне вĕлерме хунă.

Йулашки çĕрхине, вĕлерме тытса парас умĕн, Іисус Христос мĕн ҫухлĕ асапланнине калама пĕлме мар пирĕн шухăшлама та шухăш çитес çук. Вăл çав каçхине Хăй ăшĕнҫе асапланнă асап çав тĕрлĕ

йывӑр пулнӑ, ҫав тӗрлӗ пысӑк пулнӑ, вӑл асапа тўсме те пӗр Іисус Христосӑн анҙах хал ҫитнӗ. Хӑйӗн те Унӑн ӑшӗнҙе асапланнипеле пиҙӗ ҫине йунлӑ тар пӑҙӑртанса тухнӑ.

Унӑн ҙунӗ ҫав каҫхине калама ҫук пӑшӑрханнӑ, калама ҫук хуйхӑрнӑ, калама ҫук хӗн курнӑ. Пирӗн, етемӗн, ҫылахӗсене Хӑй ҫине илсе Унӑн ҙунӗ епир тунӑ ҫылахсемшӗн вӑтанса, намӑсланса ўкнӗ, хӑраса сехӗрленсе кайнӑ пирӗн ҫылӑх усалӗнҙен. Адамран пуҫласа Хӑй ҫӗр ҫине килнӗ вӑхӑта ситиҙҙен, пӗтӗм тӗнҙери етем мӗн ҙухлӗ усал ҫылӑха, мӗн ҙухлӗ тасамар ҫылӑха кӗрсе пӗтнӗ, мӗн ҙухлӗ усал туса айӑпланса, Турра кўрентерсе, ҫилентерсе пӗтнӗ, пурне те Вӑл Хӑй ҫине илнӗ. Малашне пурӑнас тӗнҙе халӑхӗ ҫак тӗнҙе пӗтиҙҙенех мӗн ҙухлӗ ҫылӑха кӗрес ҫылӑха та, мен ҙухлӗ айӑпланас айӑпа та Вӑл пурне те Хӑй ҫине илнӗ. Мӗн ҙухлӗ усал пулнине, мӗн ҙухлӗ ҫылӑх пулассине пурне витӗр курса тӑрса, пуриншӗн те хурланса, пуриншӗн те хуйхӑрса Вӑл ҫав тӗрлӗ тўсейми йывӑр асаппала асапланнӑ пирӗншӗн. Вӑл пурне те малтанах курса тӑнӑ. Йепле ўлӗмрен Христоса ӗненекенсенӗн хӑйсенӗн хушшинҙе те, Христос ҫынӗсем хушшинҙе те, Іуда пек икӗ питлӗ ҫынсем тупӑнӗҫ; йепле нумайӗшӗ вӗсем Ӑна пӑхса Унӑн хыҫҫӑн пыма мар, темӗн ҙухлӗ усал ҫылӑхсем туса пурӑнӗҫ; нумайӗшӗ Ӑна пӑхса Унӑн хыҫӗнҙен пымашкӑн тӑрӑшма мар, Унӑн тӗнне, Унӑн вӗрентнине хурлӑҫӗ, йышӑнмӗҫӗ ӑна, йе тата Вӑл каланӑ сӑмаха хӑйсем майлӑ пӑсса калаҫӗҫ, Туррӑн аслӑлӑхне пӑхӑнса пурӑнас вырӑнне хӑйсенӗн ӑсӗсем хыҫҫӑн аташса кайӗҫ, хӑйсемне пӗрле ыттисене

те аташтарĕç; çавсене пурне те Іисус Христос малтанах курса тăнă, çавсемшĕн малтанах асапланнă.

Туръ етем ăрăвĕ валли мĕн ђухлĕ ырăлăх тунă, етем ăрăвĕ ырăлăха хирĕç Турă валли усал анђах тунă; етем ăрăвĕ пĕтĕмпех çылăха кĕрсе, тасамарланса, ирсĕрленсе, айăпланса пĕтнĕ, Атте Турра кӳрентерсе, çилентерсе анђах тăнă. Іисус Христос Хăй Атте Турра йуратнине пăхсассăн, Атте Турра çав тĕрлĕ кӳрентерекен етем ăрăвне пĕтерсе тăкма тивĕçлĕ пулнă. Тепĕр йенђен Унăн, ырă кăмăллăскерĕн, çав етем ăрăвнех темĕн ђухлĕ хĕрхенесси килнĕ. çылăха парăнса, çылăх айне пулса çухалакан етем ăрăвĕшĕн ăна çухалма парићђен, Унăн Хăйĕн асапланасси килнĕ, уншăн Хăйне хĕрхенмесĕр Хăй асапланса ĕмĕрхи асапран етем ăрăвне хăтарасси килнĕ.

Çапла Хăй ăшĕнђе Іисус Христос вăл çĕрхине темĕн пек йывăр хĕн курнă, темĕн пек пысăк асаппа асапланнă. Вăл Хăй те вара Хăйĕн вĕренекенĕсене каланă: ђунăм хурланса çитрĕ Манăн, хурланса вилес патне çитрĕм, тенĕ.

Етемшĕн çав тĕрлĕ хуйхăрнă çĕртен, етеме çав тĕрлĕ хĕрхенсе уншăн асапланнă çĕртен Іисус Христоса çав етемех вăрă-хураха тытнă пек пырса тытнă та çыхнă Ăна. Тĕнђене Пултаракан Туррăн аллине, тĕнђене ырăлăх парса Тăраканăн аллине вăрă-хурах аллине çыхнă пек çыхса хунă. Етеме ырăлăхран пуçне нимĕн те туман Христоса етем Хăйне хирĕç ђукмарсем йатса пынă та тытса çыхнă. Çыхса вара Унăн тăшманĕсем патне çавăтса кайнă Ăна. Тăшманĕсем Ăна сута тăратса сут тунă, вĕлерме тивĕçлĕ Вăл тесе айăпланă Ăна. Ђĕрĕлĕх паракан Турра вĕ-

лерме хунӑ, ӗмӗр-ӗмӗрлӗхе кун-ҫул парса усракан Христосран Унӑн ҫӗр ҫинҫе пурӑнас кун-ҫулне туртса илме хунӑ. Апостолсем те пулсан, хӑйсене Іисус Христос пуринҫен те ытла ӑраснах йуратнӑскерсем, вӗсем те пулсан Ӑна пӑрахса хӑварнӑ та хӑйсем тӗрлӗ ҫӗре тарса саланса пӗтнӗ. Пилат ыйтсассӑн: хӑшне йарам, Вараввана йарам-и, Христоса йарам-и? тесе ыйтсассӑн, Унӑн тӑшманӗсем халӑха хӗтӗртсе тӑнӑ: Вараввана йама калӑр, Іисуса хӗрес ҫумне пӑталама калӑр, тесе нимӗн ӑнланман хура-халӑха хӗтӗртсе тӑнӑ. Вараввана, хурах пусакана ирӗке кӑларса йанӑ вара, тасаран таса, Святойран Святойа Іисус Христоса хӗрес ҫине пӑталамалла тунӑ. Хӗрес ҫине пӑталамашкӑн Ӑна суйа тӗнлӗ ҫынсем аллине панӑ. Лешсем Ӑна мӑшкӑллама тытӑннӑ, хӗн кӑтартма тытӑннӑ. Ҫупа-ҫупа та йанӑ Ӑна; пуҫӗнҫен те патакпа ҫапнӑ, хӗненӗ, пиҫӗ ҫине пыра-пыра сурнӑ, кулнӑ, мӑшкӑлланӑ Ӑна, йӗплӗ хулӑсенҫен пуҫ-кӑшӑлӗ туса тӑхӑнтарнӑ, ҫиййӗнҫи тумтирне сӳсе илнӗ, аллисене-урисене пӑтапала ҫапса хӗрес ҫумне ҫакнӑ Ӑна, темӗн ҫухлӗ усал ҫынна вӗлернӗ пек Ӑна ҫи усал ҫӗре, хӑрушӑ ҫӗре ҫакса вӗлернӗ, йури икӗ ҫын хушшине; ҫи усал ҫынсем, хурах пусакансем хушшине пӑталаса вӗсемпе пӗрле вӗлернӗ. Хӗрес ҫинҫе пӑталанса хӗн курса тӑнӑ ҫӗрте те хӗрхенекен пулман Ӑна, унта та асапланса вилекен ҫынтан кулса, мӑшкӑлласа тӑнӑ, ӑшӗ ҫунса ӗҫме ыйтсассӑн Ӑна ватпала уксус хутӑштарса панӑ.

Ҫав тӗрлӗ асаплансан-асаплансан Іисус Христос вилсе кайнӑ вара ҫи усал вилӗмпе, ҫи хӑрушӑ, ҫи хурлӑхлӑ, намӑслӑ, мӑшкӑллӑ вилӗмпе вӗлерес тесе

вĕлернӗ Ăна. Хĕрес вилĕмĕпе ун ҫухне ҫи усал ҫынсене анҫах вĕлернӗ.

Ісус Христос Вăл асапланнă асапĕнҫен хăталайман тăр, ҫавăнпа асапланнă тăр тесе ан шухăшлăр. Асапсенҫен хăталасшăн тăрăшман Вăл, Хăй ирĕкĕн Хăй асапланнă, Вăл Хăй кăмăлĕпе Хăй ҫав тĕрлĕ асапа парăннă. Унăн хăйĕн асапланса вилме кăмăл пулман пулсассăн, Ăна пырса сĕртĕнме шухăшлама та ҫут-ҫанталăкра никам хăйайман пулĕҫҫĕ. Ăна пырса тытнă ҫухне те ав, тытма йанă ҫынсем пырсассăн Вăл ыйтнă: кама шыратăр есир? тенĕ. Лешсем каланă: Назорей Ісуса тенĕ. Ісус вĕсене каланă: Епĕ вăл, тенĕ. Вăл ҫапла пĕр сăмах каланинҫенех тытма пынă ҫынсем пурте ҫĕре кайса ӳкнĕ.

Ісус Христос ҫапла мĕн ҫухлĕ пирĕншĕн асапланнине, мĕн ҫухлĕ Вăл пире йуратнине лайăххăн ҫухласа тăна илмешкĕн пирĕн астуса тăрас пулать: кам Вăл Ісус Христос?

Ісус Христос Вăл ҫăн Турă, пĕтĕм тĕнҫене Пултаракан хăватлă Турă Вăл, пĕтĕм Ангелсенĕн, пĕтĕм етемĕн аслă Патши Вăл, пĕтĕм ҫутҫанталăка Хăй аллинҫе тытса тăракан аслă Патша, вилнисене те, ҫĕррисене те сут тăвакан аслă Тӳре, хăрушă Тӳре Вăл ҫав Ісус Христос пирĕн ҫылăхăмăрсемшĕн, етем ҫылăхĕсемшĕн асапланма кăмăл тунă.

---

**Цѣна 3 коп.**